# ПИРĚН УХСАЙ



**Нумай ăшă сăмах янăрарě Чăваш халăх поэчě Яков Ухсай çуралнăранпа 80 çул çитнине палăртнă кунсенче. Ку номерте эпир вулакансене тутар поэчě Ренат Харис Шупашкарта каланă сăмахпа паллаштаратпăр.**

Шел пулин те, хама эпě Яков Ухсайăн çывăх тусěсен шутне кěртеймеcтěп. Поэт уявсем çине мěнле пăхнине те пěлмеcтěп эпě. Анчах чăваш халăхě, унăн литератури, унăн поэзийě маншăн мěн ачаранпах тăван пек çывăх. Ку туйăм чěрере паян та çав халлěнех упранать. Ахăртнех, çуралса ÿснě ялăмăн пěр вěçěнче чăваш касěсем вырнаçнинчен те килнě-тěр ку: ачалăхăм Елчěкрен ултă-çичě çухрăмри Пăла шывěн тутар çыранěнче иртрě, çавна май шкулта та, каярахпа институтра та, ěçре те час-часах чăваш хушшине лекеттěм.

Қаларăм ěнтě, сахал мар манăн Ухсай çинчен пěлменни, анчах унăн пěтěм пултарулăхěшěн, пěтěм поэзийěшěн пысăк пěлтерěшлě туйăм уяв туйăмě пулнине эпě аван ăнланатăп. Тăван çěршыв туйăмě пекех, чыспа тивěç туйăмě пекех, çав туйăм чи таса та пархатарлă туйăм пулса тăрать. Уяв кунěнче кěле ярса ларакан чун та, тен, хăйне кура вăйлах-тăр, анчах ăна халăх чунěн анлăшне туйма пÿрмен.

Қомпас йěппи вуншар пин çухрăм урлă Çěрěн магнит полюсне шыраса тупать. Ухсай поэзийě те çавăн пекех: пурнăçăн вышкайсăр йышлă çилě-тăвăлě витěр хěвел çути пек тухса çын патне ăнтăлать, вěлле хурчě хăй карасне васкаса пыл хунă майлах, этем чунне уяв туйăмě парнелет.

Паян Совет Союзě, пирěн пěрлехи кил-çуртăмăр, арканать, унăн хуçалăх тытăмě те йăшса çитрě. Ыранхи кун мěнле килессине пěлменнипе халăх та шикленет. Шупашкарта вара — уяв, литература уявě. Апла пулсан, чăваш халăхěн нимрен те шикленме кирлě мар, вăл сывă, ун чунě-хавалě яланхи пекех çÿлте. Шанса та ěненсе тăратăп: чуна çав шайра тытма чăваш халăхне Ухсай Яккăвěн ăслă та сăнарлă пултарулăхě пулăшса пырать.

Пысăк поэтсен метафорисем те пысăк виçеллě. Вěсем иртнине те куçран вěçертмеççě, пуласcине те курсах тăраççě, çав хушăрах иккěшне те паянхи кунпа тачă çыхăнтараççě. Ухсайăн чапа тухнă «Кěлпук мучи» поэминче çакăн пек вырăн пур. Шуррисем, вăхăтлăх чăваш ялне пырса кěнěскерсем, ялти ăратлă вăкăра сăмакун пăраки ěçтереççě те урама кăларса яраççě, хăйсем, мěн тăвать-ха ку, тесе, кулкаласа пăхса тăраççě. Ӳсěрěлсе кайнă вăкăр, урипе хытă çул çинчи юра чавса сирпěтекенскер, юлашкинчен ахăлтатса кулса тăракан шурă казаксенчен пěрине икě мăйраки çине лартса çěклет те вăтăрса тăкать. Вара ытти казаксем, чупса пырса, урса кайнă вăкăра хěçěсемпе касса пăрахаççě. Çак кунсенче мана, поэмăна çěнěрен вуланă майăн, çав хаяр вăкăр чěрěлнěн, çаплах пирěн хушăра лару-тăрăва пăлхатса çÿренěн туйăнчě. Акă мěнле шухăш çуратаççě сăнарлă метофорăсем.

Тутарсен паллă поэчěн Хасан Туфанăн та, сăмах май каласан, Яков Гавриловичăн çывăх тусěн, ăна сума суса вăл шěкěр кăна сăвă та пичетленěччě, «Прометей» ятлă вăкăр сăнарě пур. Çав вăкăр читлěхри поэта ирěке кăларма вирхěнсе пырать.

Яков Гаврилович хăй вăкăрне нимěнле ят та паман. Саманан синкер вăхăтěнче килсе тухма пултаракан вăкăра пуласлăх çыннисем лару-тăруне кура хăйсемех ят парасса лайăх пěлнě вăл. Паянхи куна илес-тěк, çав урмăш вăкăра эпир пěр-пěр «Перестрой», «Путч», «Партократ», «Демократ» е тата çавăн евěрлě мěнле те пулин ят пама пултарăттăмăр.

Шел, анчах паян пирěн халăхсемпе республикăсем шăпах çав асар-писер вăкăрăн шěвěр мăйракипе то-талитарлă патшалăхăн çěршěннě çатан карти хушшине çакланчěç. Эпě те, синкерлě вăхăт çынни, умăмра ахăрсамана вăкăрě мěкěрнине илтетěп, унăн сивě вут-хěмěпе çунса тăракан куçěсене куратăп, икě шěвěр мăйраки халь-халь хама пăталаса лартасса туятăп.

Кěлпук мучин тепěр халапěнче вăл пупа хěллехи вăрман витěр лартса кайни çинчен сăмах пырать. Çěрле вěсене кашкăр кěтěвě тапăнать. Лашисем вăйлă пулнипе Кěлпук тарса хăтăлать, анчах çуна çинчен ÿксе юлнă пупа кашкăрсем туртса çураççě. Ку сăнар маншăн тесен метафорăллă тепěр ÿкерчěк çуратать: обществăна революци пушшипе пěрмай хистесе те хăратса тăнăран пирěн лав çинчен пуппа мулла кăна мар, халăхăмăрсен кăмăл-сипет ырсемě те ÿксе юлчě. Халě эпир вěсене хамăр лав çине иле-иле хуратпăр. Тен, эпир, вěсене шыраса, каялла çаврăнтăмăр? Çук, эпир мал еннеллех куçатпăр, ун чух çухатнă ырăсем хăйсем пиртен мала ÿкнě иккен.

«Кěлпук мучире» паянхи кунпа тÿрремěнех çыхăнтаракан чаплă та витěмлě пулăмсем нумай. Ку произведени — чăваш, тутар, пушкăрт халăхěсен пурнăçěпе йăли-йěркин чăн-чăн энциклопедийě. Кěлпук мучи сăнарě пирěн тăрăхри этем чун-чěрин çирěммěш ěмěрěн малтанхи çурринчи тěп уйрăмлăхěсене кăтартать. Вăл ăслă, нимěнле лару-тăрура та пуçне усмасть, çухалса каймасть. Тÿрě кăмăллă та пархатарлă ěçпе пурăнакан хастар этеме Василий Теркинăн пиччěшě, Щукарь мучин тăванě, Ходжа Насретдинăн темиçе сыпăкри мăнукě теме пулать. Ман шутпа, Мюнхаузен барон, Дон-Кихот, Ходжа Насретдин сăнарěсемпе пěрле Кěлпук та майěпен литература палăкне çаврăнать. Пирěн тивěç — çав палăка бронзăран шăратса кăларасси. Вăл пěтěм чăваш халăхне асăнса лартнă чаплă палăк пулě.

Тÿрех каламалла, Яков Гавриловичпа пěр шайра калаçма çăмăл марччě. Вăл хăйпе пуплекене кăйкăрла пăхса тěрěсленине те кашниех тÿсеймеcтчě. Хěç пек çивчě сăмахěсем, пăрăçлă кулăшě чун витěр тухатчěç. Ухсай çырнине вулама вăй, ăнланма ăс кирлě, тěнчи вышкайсăр аслă унăн. Вăл пурне те килěшес тесе тăрăшман, анчах вăл çырнипе пěрре паллашнă çын унран уйрăлаймасть. Марина Цветаеван «Мой Пушкин» ятлă кěнеке пур, Корней Чуковскин — «Мой Уитмен»... Ухсай çинчен те пурăна-киле хăй пек талантлă поэт çавăн майлă кěнеке çырса кăларасса шансах тăратăп эпě.

Паян, самана çурхи шыв пек кěрленě, никама пăхăнми вăкăр çěр тěпретсе мěкěрешнě вăхăтра, поэтсемшěн кашни чун-чěрене витермелли сăмах каласси çăмăл мар. Яков Ухсай пурăннă пулсан — тупатчех çав сăмахсене, калатчех. Вěсем пирěншěн чи сиплě эмел вырăнне пулěччěç. Анчах ăна тавăраймăн. Вăл хăйěн историлле аслă çулě çинче. Ěнтě хамăра кирлě канаш-сěнěве пирěн унăн сăвви-поэминче шырамалла.

**Ренат ХАРИС,**
**тутар поэчě**